### Ача шăпи – ашшĕ-амăшĕн аллинче

# Ача çуратнипех анне пулаймăн...

Çул çитмен çамрăксемпе тата вĕсен прависене хӳтĕлессипе ĕçлекен комисси ларăвĕнче тăтăшах çул çитмен çамрăксемпе вĕсен ашшĕ-амăшĕсене пăхса тухаççĕ. Кашниех тунă йăнăша урăх тумасси çинчен калаççĕ. Шел, панă сăмаха тытманнисем те пур. Нумаях пулмасть пулса иртнĕ ларура çамрăк хĕрарăм: «Ачана туртса ан илĕр, урăх ĕçместĕп», – терĕ куççульпех. Шел, пĕр уйăх та тытаймарĕ вăл хăйне алăра. Каллех ун ячĕпе вăл эрех ĕçнĕшĕн ачине йĕркеллĕ пăхмасть тесе протокол çырнă. Аслă ачи тĕлĕшпе ăна çак сăлтава пулах амăшĕн прависенчен хăтарнăччĕ. Тивĕçлĕ пĕтĕмлетӳ тăвайман курăнать. Халĕ те кӳмере выртакан иккĕмĕш ачине пăрахсах эрех черккипе туслашнă тĕслĕхсем пĕрре мар пулаççĕ иккен.

– Туртса илме çуратман эпĕ ку ачана. Тархасшăн тепĕр шанăç парăр мана, – хальхинче те йĕрсе кăтартрĕ 30 çула та çитмен хĕрарăм. – Эрех ĕçессинчен сиплеме шутлатăп. Тулĕк ачана туртса ан илĕр.

Ун кăмăлне шута илчĕç хальхинче те комисси членĕсем. Тĕрĕс çул çине тăма тепĕр хут шанăç пачĕç. Хальхинче юлашки хут. Вăл çамрăк-ха. Хăйне алăра тытсан, анне тивĕçне чыслăн пурнăçлама унăн май пур. Унсăрăн чавса çывăх та çыртма çук тенĕ евĕр пулма пултарать.

Алла черкке тытнă чухне хамăрăнне кăна мар, ачасен пурнăçне те пĕтернине ăнланасшăн мар пулас хăшĕсем. Ларура пăхса тухнă 50 çултан кăшт иртнĕ хĕрарăм та ку енĕпе аптрасах тăман, пĕр ачи унăн паян опекунпа пурăнать. Уншăн алимент тӳлеменнипе чĕнтернĕ хĕрарăма комисси ларăвне.

– Киле кĕртместĕп эп ăна. Ывăлсем виличчен мĕншĕн çакă вилмерĕ, – чуна çӳçентерессĕ паян хĕрне кунçул панă амăшĕн сăмахĕсем...

Ачишĕн çунакан амăшĕн чĕлхи çаврăнайман пулĕччĕ çак сăмахсене калама. Тепĕр тесен йĕркеллĕ амăшĕнчен кам ачана туртса илтĕр? Кам чарнă ăна вăхăтĕнче хĕрĕсене тĕрĕс воспитани пама?

Вăхăтра тĕрĕс пĕтĕмлетӳ тусан, эрех вырăнне ача пуласлăхне мала хурсан, чарăнма пулать пулĕ. Ав, комисси ларăвне чĕнтернĕ арçын çапла туни куç умĕнчех. Мăшăрне инкек вĕсенчен вăхăтсăр уйăрни хăй кăна мĕн пысăкăш инкек. Эппин, ашшĕн халĕ аслă класра вĕренекен ывăлĕшĕн амăшĕ вырăнне те пулмалла, ашшĕнчен тĕслĕх илтĕр вăл.

Сахал мар вĕт паян çул çитмен çамрăксем эрех-сăра ĕçнĕ тĕслĕхсем. Хальхинче те çакăн пек тĕслĕхсене пăхса тухма тиврĕ ларура. Ашшĕ-амăшĕсене хăйсен тивĕçĕсене кирлĕ пек пурнăçламаншăн административлă майпа явап тыттарчĕç.

# Хуйхă ют пулать-ши?..

Асăннă комисси Муркаш ял тăрăхĕнче кунти çемьесемпе ĕçлекен комиссипе тата Муркаш шкулĕнчи профилактика канашĕпе ĕçлекен комиссипе пĕрле ирттернĕ ларура та (юлашки вăхăтра асăннă комисси хăйĕн ларăвне кашни ял тăрăхне тухса ирттерчĕ) сӳтсе явмалли сахал мар пулчĕ. Ял тăрăхĕнче ĕçлекенсем тăтăшах ăнăçсăр çемьесене çӳреççĕ пулин те, кунта та çитĕнекен ăрăва воспитани парас ыйту татăлнă теме çук-ха. Ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Н.И.Никитин каланă тăрăх, учетра кун йышши 14 çемье тăрать, учетра тăракан çул çитмен çамрăксем те çавăн чухлех. Муркаш шкулĕпе ял тăрăхĕ ку ыйтупа тачă çыхăнса ĕçлеççĕ. Результатсем те çук мар.

–Эпĕ чăннипех те хам ку таранччен тĕрĕс мар пурăннине ăнлантăм, тавах сире çакăн пек тĕл пулса калаçусем ирттернĕшĕн, - терĕ мана пĕр хĕрача.

Шкул директорĕн воспитани ыйтăвĕсемпе ĕçлекен çумĕн Г.Л. Сидюшкинан çак сăмахĕсем чăннипех те шкул кашни ача шăпипе кăсăкланнине, тĕрĕс çултан пăрăнма хăтланакан кашни ачашăн тăрăшнине кăтартса парать. Ашшĕ-амăшĕсемпе ирттернĕ юлашки пухура каçхи рейдсем ирттерме те калаçса татăлнă.

Анчах та паян шкул çине кăна шанса ларни килĕшӳсĕр пуль. Ашшĕ-амăшĕсен хăйсен ачисемшĕн чи малтан хăйсем яваплине ăнланмалла. Ларура çакă та паллă пулчĕ. Çурлатринчи хăшпĕр çемьесенче хăйсен ачисем патне килекен «юлташĕсене» хăйсем патнех çĕр каçма ирĕк хăварнă тĕслĕхсем пулнă. Хамăр ача килте чух чун вырăнтах, палах. Анчах кунта хамăр патра çĕр каçакан ачасен ашшĕ-амăшĕсем хăйсене мĕнле туйни çинчен те манас марччĕ. Хамăра вĕсен вырăнне лартни кирлех пуль.

Вăхăтра тунă шăнкăрав сирĕн ачăра та, ун юлташне те ытлашши ирĕке каясран сыхласа хăварма кирлĕ. Пуш сăмахсем мар кусем. Ирхине шкула килсе уроксене кĕмесĕр унта-кунта çапкаланса çӳрекен ачасем те тĕл пулаççĕ. Çак ларура та кун пек тĕслĕхсене темиçе пăхса тухрĕç. Апла пулсан ку ыйтупа тата та тăрăшарах ĕçлемелле-ха. Пирĕн те, вăл е ку ачашăн ют шутланакансен те. Вăл е ку ача йăнăш утăм тăвасса пĕлсе тăрсах куçа хупса иртес марччĕ унтан. Хамăртан килнĕ утăма тăвасчĕ. Йĕри-тавралла пăхса илĕр-ха: сирĕн кафере кăнтăр кунĕнчех вăхăт ирттерсе ларакан çамрăк шкул ачи мари? Сирĕн магазинта сăра илнĕ çынпа пĕрле тăраканни çул çитмен çамрăк мар-и? Эсĕ ертсе пыракан клубра ӳсĕр тăракан çамрăк çинчен те киле пĕлтермеллеччĕ. Çак ырă утăмсене тата та тăсса кайма пулать. Вĕсенчен пĕрне те пулин тусан тем пекехчĕ. Хуйхă ют пулмасть пуль. Тен, эсир тунă çак утăм çав инкек каярахпе сирĕн киле кĕресрен сыхласа хăварĕ.

**Л.ПАВЛОВА.**

### Пĕтĕм тĕнчери çемье кунĕнчен

# 100-мĕшне те, ытти ачасене те чысларĕç

**(Вĕçĕ. Пуçл. 1-мĕш стр.).**

– Кăçал районĕпе 102 ача çуралнă. Вĕсенчен 53-шĕ çемьере пĕрремĕш пулчĕç, Тепĕр 35-шĕн вара килте аппăшĕ е пиччĕшĕ пур. Ашшĕ-амăш юратăвне сирĕн пепкĕрсем амăш сĕчĕпе кăна мар, килти ăшă лару-тăруран та илчĕр, – терĕ район пуçлăхĕ Ю.А. Иванов пуçтарăннă çамрăк çемьесене саламланă май.

Юрий Александрович сăмахĕпе килĕшнине пĕлтерсе, пулас каччăсемпе хĕрсем хăйсен чĕлхипе пĕр чарăнмасăр калаçрĕç. Ара, мĕнле кăна ăшă сăмах каламаççĕ те-ха вĕсен ячĕпе. Район пуçлăхĕн çумĕ, культура тата архив ĕçĕсен пайĕн ертӳçи А.Е. Андреева, ЧР Патшалăх Канашĕн депутачĕ, районти тĕп больницăн тĕп врачĕ В.Г. Данилов, Раççей Геройĕ Е.Г. Борисов, Муркаш ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Н.И. Никитин, ял тăрăхĕнчи çемьесемпе ĕçлекен комисси председателĕ Р.П. Аксендарова саламларĕç. Ашшĕ-амăшĕ валли те тем чухлех усăллă сĕнӳсем. Федор атте, ав, ачана çие юлсанах воспитани памаллине палăртрĕ.

Пуш алăпа таврăнмарĕç çак кун пĕчĕк хăнасем. Уява килнĕ 5 пепкен ашшĕ-амăшне РФ Пенсии фончĕн районти управленийĕн ертӳçи Е.М.Александрова ача амăшĕн капиталне илме ирĕк паракан сертификатсем парнелерĕ. Чăваш Республикинчи сывлăх сыхлавĕ тата социаллă аталану министерствин Н.П. Петрова ертсе пыракан районти социаллă хӳтлĕх пайĕ район администрацийĕ ячĕпе хатĕрленĕ пысăк çемçе шурупасем вара пĕчĕк шăпăрлансемшĕн официаллă йĕркепе илнĕ пурнăçри пĕрремĕш парне пулчĕ. Муркашри «Путене» ача сачĕн воспитанникĕсем те илемлĕ юрă-ташăпа пĕрле хăйсем тунă ӳкерчĕксене парнелерĕç. Савăнăçĕ тем чухлех пулчĕ. Каçхине те тутлă çывăрчĕç пулĕ-ха уяв хыççăн. Куç ан ӳктĕр, тесе Федор атте вĕсене Турă шывĕпе сирпĕтрĕ.

**Л.ТУКТИНА.**

### Салтак ячĕ тухсан

# Чыс кӳмен утăма тăвас марччĕ

**(Вĕçĕ. Пуçл. 1-мĕш стр.).**

Кĕркуннехи медицина тĕрĕслевне вара малтан шутласа хурсах вĕçне çитермест «ăс пухнă» çамрăк. Пуç ыратни аптăрани çинчен пĕлтерчĕ вăл. Çапла ăна комисси сентябрĕн 26-мĕшĕнче Шупашкарти больницăна тĕрĕслеве ячĕ. Медицина результачĕсене палăртнă вăхăта (тепĕр эрнерен) килсе памарĕ. Ноябрь вĕçĕнче ăна Чăваш Республикинчи çар комиссариачĕн медицина комиссийĕ витĕр тухма повестка патăмăр. Вăл вара повестка çине алă сулчĕ. Ку таранччен ăна пĕр повестка кăна паман. Административлă майпа ответне тыттарнă ĕнтĕ. Кăçалхи мартăн 31-мĕшĕнче çак каччăна медицина тĕрĕслевне районти çар комиссариатне чĕнтĕмĕр. Вăл вара шăпах çак вăхăт тĕлне инçете ĕçлеме тухса каять. Хăйĕн пурнăçне пăснипе пĕрлех ашшĕ-амăшĕн пичĕсене те хĕретет.

**– Хĕсмет вăхăчĕ 12 уйăх çеç. Çар службинчен пăрăнмалла мар пек туйăнать.**

**В.В.**: Хальхи вăхăтра çара каяссинчен пăрăнакансем хăйсем тĕрĕс мар утăм тунине ăнланса илеççĕ пулĕ тетĕп. Аслă пĕлӳллисем, сăмахран, çарта пулман пулсан та, контракт çырма пултараççĕ. Паян çарта та лайăх специалистсем кирлĕ: çар техники çĕнелсех пырать. Çар пурнăçĕ вара яшсемшĕн малашнехи ĕçсенче пысăк тĕкĕ пулса тăрать.

**И.В.**: Малтанласа шкулсенче «начальная военная подготовка» предмет пурччĕ. Çар ĕçĕн никĕсĕсене яшсем салтака каиччченех пĕлетчĕç. Халĕ вара яшсен ку енĕпе пĕлӳ çук тесен те юрать. Çавăнпах вĕсен çара каяссинчен хăрасси çуралать. Çав вăхăтра яшсем те, хальхипе танлаштарсан, кăмăл-сипет, ут-пӳ аталанăвĕ енчен самаях çирĕппisем килетчĕç. Халĕ яшсем хушшинче ответлăха туякансем сахаллансах пыраççĕ. Вĕсем Раççей Федерацийĕн Конституцийĕнче яшсен тивĕçĕ пирки çырнă статьяна пăсаççĕ. Ашшĕ-амăшĕсен те кăшт шутламалла пулĕ çакăн çинчен.

**ХЫÇÇĂМАХ: Çара каяссинчен пăрăнакансене çар комиссариачĕн пĕр майпа çеç айăплама ирĕк пур – административлă майпа (штраф 500 тенкĕ). Анчах ку яшсене пĕртте хăратмасть. Апла пулсан камăн тата мĕн тумалла-ха йĕркелĕх пултăр тесе? Яшсем хăйсен тивĕçне туллин пурнăçлаччăр тесе çар службин вăхăтне тата миçе уйăх кĕскетмелле-ши?**

**Н. НИКОЛАЕВА калаçнă.**

### Спорт афиши

# «Хыпар» кубокĕшĕн – ăмăрту

Майăн 22-мĕшĕнче Шомикри пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан тĕп шкулта Н.В. Никольский профессора асăнса «Хыпар» хаçат кубокне çĕнсе илессишĕн спорт ăмăртăвĕ иртет.

Ăмăртура 6-мĕш класра вĕренекенсенчен пуçласа 11-мĕшсем таранах тĕрлĕ дистанциллĕ кроса тухĕç. Командăра 3 арçын ачапа 3 хĕр ача, тата пĕр представитель пулмалла.

Ĕç коллективĕсене те ăмăртăва йыхравлаççĕ. Вĕсен командисенче 3 хĕрарăмпа 3 арçын пулмаллине палăртнă. Çĕнтерӳçĕсене парнесем кĕтеççĕ.

### Редакци почтинчен

# Тав тăватпăр

Пирĕнтен вăхăтсăр уйрăлса кайнă юратнă мăшăрăма тата аттене Пиккикасси ялĕнче пурăннă Георгий Геннадьевич Федотова юлашки çула ăсатма пулăшнăшăн, пирĕнпе пĕрле чи пысăк хуйхăна пайланăшăн ООО «Моргаушрайбыт» администрацине, Муркашри автозаправкăра ĕçлекенсене, тăван-пĕтене, пускилсене, ял-йыша тата унăн юлташĕсене чĕререн тав тăватпăр.

**Мăшăрĕ Ирина, хĕрĕ Оксана.**

## Пĕлтерӳсем. Объявления





**Скидка на окна до 25 %.**
**Весь май москитная сетка в ПОДАРОК!**

**Икĕ хут пăрулана хура ĕне сутатпăр. Ыйтса пĕлмелли телефон: 8-927-996-15-94.**

**Продаю земельный участок 15 соток в д. Сюрлатри. Тел.: 8-960-30-90-144.**

**Юридическая помощь населению:**
**практикующий юрист**
**МУСАЕВА (Илугина) Светлана Викторовна**
**оказывает юридические услуги по брачно-семейным, имущественным, наследственным, трудовым и прочим отношениям по адресу: с. Моргауши, ул. Мира, д. 6, офис № 306 (здание администрации, бизнес-инкубатор, 3 этаж).**
**Тел.: 62-4-15, 8-927-389-07-55.**

**Продаем: доски 25-50 мм (обрезные, необрезные), брус любого сечения, жерди, подтоварник. Изготовим на заказ: срубы, беседки любого размера. Цена договорная, доставка по району бесплатно.**
**Тел.: 8-927-667-28-32, 8-919-656-13-84. 1-5.**

**Продаю песок речной, гравмасу.**
**Тел.: 8-903-063-86-38.**


**Инициативная группа собственников земельных долей на территории СХПК им. Кирова сообщает, что общее собрание участников долевой собственности по вопросу выдела земельных долей в натуре состоится 19 июня 2009 года в 11 часов в здании Тораевского сельского Дома культуры с поветской дня:**

**1. Местоположение части, находящейся в долевой собственности земельного участка, в границах которой в первоочередном порядке выделяются земельные участки в счет земельных долей СХПК им. Кирова;**

**2. Местоположение части, находящейся в долевой собственности земельного участка, в границах которой находятся невостребованные земельные доли СХПК им. Кирова.**

**Инициативная группа собственников земельных долей на территории СХПК «Динамо» сообщает, что общее собрание участников долевой собственности по вопросу выдела земельных долей в натуре состоится 19 июня 2009 года в 11 часов в здании Большетокшикского сельского Дома культуры с поветской дня:**

**1. Местоположение части, находящейся в долевой собственности земельного участка, в границах которой в первоочередном порядке выделяются земельные участки в счет земельных долей СХПК «Динамо»;**

**2. Местоположение части, находящейся в долевой собственности земельного участка, в границах которой находятся невостребованные земельные доли СХПК «Динамо».**

Администрация Моргаушского района выражает глубокое соболезнование председателю совета Большесундырского райпо Майковой Л.П. по поводу кончины матери
**ВАСИЛЬЕВОЙ**
**Ефросинии Васильевны.**

Коллектив Б. Сундырской школы выражает глубокое соболезнование учительнице начальных классов Ивановой Г.М. по поводу безвременной кончины брата
**ШУЛЯЕВА**
**Валерия Михайловича.**

Мăн Сĕнтĕр ял тăрăхĕн администрацийĕ кунта инспектор пулса ĕçлекен З.П. Шуляевăн мăшăрĕ
**Валерий Михайлович**
**ШУЛЯЕВ**
нумай вăхăт чирлесе выртнă хыççăн вилсе кайнă пирки çемйипе тата тăванĕсемпе пĕрле чĕререн хурланса пĕлтерет.


**Моргаушская районная газета**
**«Çĕнтерӳ ялавĕ»**

УЧРЕДИТЕЛИ:
Министерство культуры, по делам национальностей, информационной политики и архивного дела Чувашской Республики.
РГУ «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерӳ ялавĕ» Минкультуры Чувашии.

**Главный редактор А.И. ТИХОНОВ.**
**АДРЕС: 429530, Чувашская Республика, село Моргауши, улица Мира, дом 9А.**
**ТЕЛЕФОНЫ: директор-главный редактор - 62-1-36, заместитель главного редактора - 62-2-82, бухгалтерия - 62-1-35, отделы: общественно-политической жизни - 62-2-82, экономики - 62-1-38.**
**Факс: 62-1-36; E-mail: morpress@cbx.ru**

**Газета зарегистрирована управлением Федеральной службы по надзору за соблюдением законодательства в сфере массовых коммуникаций и охране культурного наследия по Приволжскому федеральному округу.**
**Свидетельство о регистрации ПИ № ТУ 21-00025 от 26 декабря 2008 года.**

**Объем 1 усл. печатный лист.**
**Рукописи не рецензируются и не возвращаются, объемом более 2 стр. не принимаются.**
**Редакция не несет ответственности за содержание рекламных объявлений.**

**ИНДЕКС ИЗДАНИЯ: 54822.**
**Газета выходит на чувашском языке по средам, субботам.**
**Дежурный по номеру Белов А.П.**
**Номер подписан 19.05.2009 г.**
**Время подписания в печать: по графику – 17 час. 20 мин, фактическое – 17 час. 20 мин.**
**Заказ Тираж 3850.**

Номер набран и сверстан в РГУ «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерӳ ялавĕ», отпечатан в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.